ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ ПАССАЖИРСЕНЕ ТАТА БАГАЖА АВТОМОБИЛЬ ТРАНСПОРЧЁПЕ ТАТА ХУЛАРИ ÇЁР ÇИНЧИ ЭЛЕКТРИЧЕСТВО ТРАНСПОРЧЁПЕ ТУРТТАРАССИНЕ ЙЁРКЕЛЕССИ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КЁРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2023 çулхи утă уйăхĕн 6-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче пассажирсене тата багажа автомобиль транспорчёпе тата хулари çĕр çинчи электричество транспорчёпе турттарассине йĕркелесси çинчен" 2003 çулхи раштав уйăхĕн 29-мĕшĕнчи 48 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2004, 58 №; 2006, 70 №; 2008, 76 №; 2009, 83 №; 2011, 91 №; 2012, 96 №; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 7 №; 2015, 5 №; 2016, 6 №; "Республика" хаçат, 2018, раштав уйăхĕн 5-мĕшĕ; 2020, авăн уйăхĕн 30-мĕшĕ; 2021, раштав уйăхĕн 29-мĕшĕ; 2022, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 28-мĕшĕ; 2023, нарăс уйăхĕн 22-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 1^2 статьяна çакăн пек çырса хурас:

"**1^2 статья. Тĕп ăнлавсем**

Çак Саккунра Федерацин "Раççей Федерацийĕнче пассажирсене тата багажа автомобиль транспорчёпе тата хулари çĕр çинчи электричество

транспорчĕпе тăтăш турттарассине йĕркелесси тата Раççей Федерацийĕн уйрăм саккунĕсен акчĕсене улшăнусем кĕртесси çинчен" 2015 çулхи утă уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 220-ФЗ №-лĕ саккунĕпе (малалла – Федераци саккунĕ), Федерацин "Раççей Федерацийĕнче пассажирсене тата багажа çăмăл таксипе турттарассине йĕркелесси, Раççей Федерацийĕн уйрăм саккунĕсен акчĕсене улшăнусем кĕртесси тата Раççей Федерацийĕн саккунĕсен акчĕсен уйрăм положенийĕсем хăйсен вăйне çухатни çинчен" 2022 çулхи раштав уйăхĕн 29-мĕшĕнчи 580-ФЗ №-лĕ саккунĕпе (малалла – Федерацин такси çинчен калакан саккунĕ) тата федерацин ытти саккунĕсемпе палăртнă пĕлтерĕшлĕ тĕп ăнлавсемпе усă кураççĕ.";

2) 3 статьян иккĕмĕш абзацне "Чăваш Республикинче çăмăл таксипе тăтăш турттарассине йĕркелес ĕç-хĕле" сăмахсем хыççăн "Федерацин такси çинчен калакан саккунĕпе, ытти" сăмахсем хушса хурас;

3) 4 статьяра:

а) 1-мĕш пайра:

"муниципалитетсем хушшинчи тăтăш турттармалли маршрутсем тăрăх" сăмахсем хыççăн ", Чăваш Республикин "Пассажирсене тата багажа автомобиль транспорчĕпе тата хулари çĕр çинчи электричество транспорчĕпе тăтăш турттарас ĕçе йĕркелес енĕпе пурнăçламалли полномочисене Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем тата Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем хушшинче çĕнĕрен пайласси çинчен" 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 124 №-лĕ саккунĕн 2 статйин 2-мĕш пайĕн положенийĕсене шута илсе Чăваш Республикин Çĕнĕ Шупашкар хулин, Шупашкар хулин чиккисенче тăтăш турттармалли муниципаллă маршрутсем (малалла – Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципаллă маршрутсем)" сăмахсем хушса хурас;

"Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕ" сăмахсемпе улăштарас, "Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен ĕç тăвакан власть органĕсене (малалла – Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн полномочиллĕ органĕ)" сăмахсене "Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен ĕç тăвакан органĕсене (малалла – Чăваш Республикин ĕç тăвакан полномочиллĕ органĕ)" сăмахсемпе улăштарас;

ă) 2-мĕш пая çакăн пек çырса хурас:

"2. Тăтăш турттармалли муниципаллă маршрутсем тăрăх тăтăш турттарассине йĕркелес ĕçе вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем, Чăваш Республи-

кин Çĕнĕ Шупашкар хулин, Шупашкар хулин вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемсĕр пуçне, Чăваш Республикин "Пассажирсене тата багажа автомобиль транспорчĕпе тата хулари çĕр çинчи электричество транспорчĕпе тăтăш турттарас ĕçе йĕркелес енĕпе пурнăçламалли полномочисене Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем тата Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем хушшинче çĕнĕрен пайласси çинчен" 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 124 №-лĕ саккунĕн 2 статйин 2-мĕш пайĕн положенийĕсене шута илсе (малалла – вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем) Федераци саккунĕпе килĕшӳллĕн пурнăçлаççĕ.";

б) 3-мĕш пайра:

пĕрремĕш абзацра:

"Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн полномочиллĕ органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан полномочиллĕ органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

"муниципалитетсем хушшинчи тăтăш турттармалли маршрутсене" сăмахсем хыççăн ", Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципаллă маршрутсене" сăмахсем хушса хурас;

виççĕмĕш абзацра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн полномочиллĕ органĕпе" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан полномочиллĕ органĕпе" сăмахсемпе улăштарас;

в) 7^1-мĕш пайра "Чăваш Республикин Çĕнĕ Шупашкар хулин, Шупашкар хулин чиккисенче тăтăш турттармалли" сăмахсене "Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче" сăмахсемпе улăштарас;

г) 9-мĕш пайра:

"Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн полномочиллĕ органĕсем" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан полномочиллĕ органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

"муниципалитетсем хушшинчи тăтăш турттармалли маршрутсене" сăмахсем хыççăн ", Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципаллă маршрутсене" сăмахсем хушса хурас;

д) 10-мĕш пая "муниципалитетăн тăтăш турттармалли маршручĕ" сăмахсем хыççăн ", Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципалитетăн тăтăш турттармалли маршручĕ" сăмахсем хушса хурас;

е) 11-мĕш пая "муниципалитетăн тăтăш турттармалли маршручĕн" сăмахсем хыççăн ", Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципаллă маршрутăн" сăмахсем хушса хурас;

ĕ) 11^1-мĕш пайра:

пĕрремĕш абзаца "муниципалитетсем хушшинчи тăтăш турттармалли маршрутсем тăрăх" сăмахсем хыççăн ", Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципаллă маршрутсем тăрăх" сăмахсем хушса хурас;

1-мĕш пункта "муниципалитетсем хушшинчи тăтăш турттармалли маршрутсен" сăмахсем хыççăн ", Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципаллă маршрутсен реестрĕнче" сăмахсем хушса хурас, "муниципалитетсем хушшинчи тăтăш турттармалли маршрут тăрăх" сăмахсем хыççăн ", Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципаллă маршрут тăрăх" сăмахсем хушса хурас;

3-мĕш пункта ", Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципаллă маршрутсем" сăмахсем хушса хурас;

5-мĕш пунктра:

"муниципалитетсем хушшинчи тăтăш турттармалли маршрутсем тăрăх" сăмахсем хыççăн ", Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципаллă маршрутсем тăрăх" сăмахсем хушса хурас;

"Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн полномочиллĕ органне" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан полномочиллĕ органне" сăмахсемпе улăштарас;

ж) 12-мĕш пайра:

"муниципалитетăн тăтăш турттармалли маршручĕ" сăмахсем хыççăн ", Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципаллă маршрут тăрăх" сăмахсем хушса хурас;

"Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн полномочиллĕ органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан полномочиллĕ органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

з) 13-мĕш пайра:

пĕрремĕш абзацра:

"Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн полномочиллĕ органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан полномочиллĕ органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

"муниципалитетсем хушшинчи тăтăш турттармалли маршрутсем тăрăх" сăмахсем хыççăн ", Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципаллă маршрут тăрăх" сăмахсем хушса хурас;

иккĕмĕш абзаца "тăтăш турттармалли муниципаллă маршрут тăрăх" сăмахсем хыççăн ", Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципаллă маршрут тăрăх" сăмахсем хушса хурас;

виççĕмĕш абзаца "тăтăш турттармалли муниципаллă маршрут тăрăх" сăмахсем хыççăн ", Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципаллă маршрут тăрăх" сăмахсем хушса хурас;

тăваттăмĕш абзацра:

"Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн полномочиллĕ органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан полномочиллĕ органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

"муниципалитетсем хушшинчи тăтăш турттармалли маршрут тăрăх" сăмахсем хыççăн ", Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципаллă маршрут тăрăх" сăмахсем хушса хурас;

и) 15-мĕш пайра:

"Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн полномочиллĕ органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан полномочиллĕ органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

"муниципалитетсем хушшинчи маршрутсене тата муниципалитетăн" сăмахсене "муниципалитетсем хушшинчи тăтăш турттармалли маршрутсене, Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципаллă маршрутсене тата муниципаллă" сăмахсемпе улăштарас;

к) 18-мĕш пайра:

"тăтăш турттармалли муниципаллă маршрутпа" сăмахсем хыççăн ", Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципаллă маршрутпа" сăмахсем хушса хурас;

"тăтăш турттармалли муниципаллă маршрутпа" сăмахсем хыççăн ", Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципаллă маршрутпа" сăмахсем хушса хурас;

"Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн полномочиллĕ органĕпе" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан полномочиллĕ органĕпе" сăмахсемпе улăштарас;

4) 6 статьяра:

а) иккĕмĕш абзацра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн полномочиллĕ органне" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан полномочиллĕ органне" сăмахсемпе улăштарас;

ă) виччĕмĕш абзаца çакăн пек çырса хурас:

"халăха транспорт пулăшăвĕ памалли регионти комплекслă плана туса хатĕрлемелли тата пурнăçламалли йĕркене палăртать, халăха транспорт пулăшăвĕ памалли регионти комплекслă плана çирĕплетет, çавăн пекех халăха транспорт пулăшăвĕ памалли регионти стандарта çирĕплетет;";

б) тăваттăмĕш абзаца ", Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципаллă маршрутсен" сăмахсем хушса хурас;

в) пиллĕкмĕш абзаца "муниципалитетсем хушшинчи тăтăш турттармалли маршрутсене" сăмахсем хыççăн ", Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципаллă маршрутсене" сăмахсем хушса хурас;

г) çиччĕмĕш абзаца ", Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципаллă маршрутсен" сăмахсем хушса хурас;

д) саккăрмĕш абзац хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

е) вуннăмĕш абзаца çакăн пек çырса хурас:

"юридически сăпата, уйрăм предпринимателе е физически сăпата çăмăл таксипе пассажирсем тата багаж турттарас енĕпе ĕçлеме ирĕк пани (малалла – ирĕк пани) е ирĕк пани вăйра тăнине пăрахăçласси çинчен, çăмăл таксипе турттаракансен (малалла çавăн пекех – турттаракан) регионти реестрне улшăнусем кĕртесси çинчен, çăмăл таксипе турттаракансен регионти реестрĕнчен çырса панине тата çăмăл таксисен регионти реестрне сведенисем кĕртни çинчен пĕлтернине илесси çинчен, çăмăл таксисен регионти реестрне улшăнусем кĕртесси çинчен, çăмăл таксисен регионти реестрĕнчен сведенисене кăларса пăрахасси çинчен, çăмăл таксисен регионти реестрĕнчен çырса панине илесси çинчен, çăмăл таксипе турттаракансен регионти реестрне улшăнусем кĕртесси çинчен калакан заявленисене тăратмалли йĕркене тата вĕсен формине çирĕплетет;";

ĕ) вун иккĕмĕш абзаца "муниципалитетсем хушшинчи тăтăш турттармалли маршрут тăрăх" сăмахсем хыççăн ", Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципаллă маршрут тăрăх" сăмахсем хушса хурас;

ж) вун виччĕмĕш абзацра:

"тăтăш турттармалли муниципаллă маршрута" сăмахсем хыççăн ", Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муници-

паллă маршрута" сăмахсем хушса хурас, "тăтăш турттармалли муниципаллă маршрутпа" сăмахсем хыççăн ", Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципаллă маршрутпа" сăмахсем хушса хурас;

"Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн полномочиллĕ органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан полномочиллĕ органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

з) çакăн пек çырса вун улттăмĕш – вăтăр тăваттăмĕш çĕнĕ абзацсем хушса хурас:

"Федерацин такси çинчен калакан саккунĕн требованийĕсене шута илсе:

ирĕк панине памалли йĕркене палăртать;

çăмăл таксипе турттаракансен регионти реестрне улшăнусем кĕртмелли йĕркене палăртать;

ирĕк пани вăйра тăнине чарса лартмалли, ăна пăрахăçламалли тата çĕнĕрен вăя кĕмелли йĕркене палăртать;

çăмăл таксисен регионти реестрне сведенисем кĕртмелли, вĕсене улăштармалли тата çав реестртан кăлармалли йĕркене палăртать;

çăмăл таксине, ун çинчен пĕлтерекен сведенисене çăмăл таксисен регионти реестрне кĕртнĕ, харпăрлăхра тытакан е унпа саккунлă ытти майпа хуçаланакан юридически сăпат е уйрăм предприниматель (малалла – ĕç тăвакан) çăмăл таксипе турттаракан физически сăпат (малалла – заказчик) çăмăл таксипе усă курни е усă курманни çинчен калакан информацие, ĕç тăвакан заказчике çăмăл такси водительне рейс умĕн, смена умĕн тата рейс хыççăн, смена хыççăн медицина тĕрĕслевĕсем тухмалли, заказчик çăмăл такси пек усă куракан транспорт хатĕрĕн техника тĕлĕшĕнчи тăрăмне рейс умĕн е смена умĕн тĕрĕслев ирттермелли майсем туса пани çинчен калакан информацие регионти информаци тытăмне тăратмалли йĕркене палăртать;

заказчике усă курма çăмăл такси, ăна регионти çăмăл таксисен реестрне кĕртнĕ, пани çинчен заказчикăн çăмăл таксипе пассажирсем тата багаж турттарма тытăниччен пĕлтермелли тата асăннă пĕлтернине учета илмелли йĕркене палăртать;

çăмăл такси заказ памалли службăн регионти реестрне улшăнусем кĕртмелли йĕркене палăртать;

Чăваш Республикин ĕç тăвакан полномочиллĕ органĕ çăмăл таксипе турттаракансен регионти реестрне тата (е) çăмăл таксисен регионти ре-

естрне кĕртнĕ улшăнусем çинчен калакан сведенисене илме май çукки çинчен пĕлтермелли йĕркене палăртать;

çăмăл таксипе пассажирсем тата багаж турттарни çинчен, çав шутра çăмăл такси тата çăмăл такси водителĕ ăçта вырнаçса тăни çинчен калакан сведенисене регионти информаци тытăмне куçармалли сведенисен переченьне, çавăн пекех асăннă сведенисене тăратмалли йĕркене тата формăна палăртать;

Федерацин "Информаци, информаци технологийĕсем тата информацие хŭтĕлесси çинчен" 2006 çулхи утă уйăхĕн 27-мĕшĕнчи 149-ФЗ №-лĕ саккунĕн требованийĕсене шута илсе çăмăл таксипе турттаракансен регионти реестрне, çăмăл таксисен регионти реестрне тата çăмăл такси заказ памалли службăн регионти реестрне регионти информаци тытăмĕпе усă курса тытса пымалли йĕркене палăртать;

енчен те çăмăл такси заказ памалли служба хăйĕн ĕç-хĕлне "Интернет" информаципе телекоммуникаци сечĕпе усă курса пурнăçлама палăртмасть пулсан, çăмăл такси заказ памалли службăн ĕçĕ-хĕлĕ çинчен калакан информаци çăл куçĕсене тата ăна вырнаçтармалли йĕркене палăртать;

енчен те çăмăл такси заказ памалли служба хăйĕн ĕç-хĕлне "Интернет" информаципе телекоммуникаци сечĕпе усă курса пурнăçламасть пулсан, турттаракансем туса паракан тŭлевлĕ пулăшу ĕçĕсем, вĕсен хакĕ тата çавнашкал пулăшу ĕçĕсемшĕн тŭлемелли йĕркесем çинчен калакан сведенисене вырнаçтармалли йĕркене палăртать;

пассажирсем тата багаж турттарма заказсем нумай пулакан вырăнсенче çăмăл таксисем валли парковкăсем (парковка вырăнĕсем) йĕркелессипе, пурте усă куракан парковкăсенче çăмăл таксисене тăратма вырăнсем уйăрса парассипе, çăмăл таксипе пассажирсем турттарнă чухне пурăнмалли çурт-йĕр зонисенче, аэропортсем, чукун çул вокзалĕсем, автовокзалсем (автостанцисем), культура объекчĕсем, медицина организацийĕсем тата ытти объектсем çывăхĕнче вырнаçнă урам-çул-йĕр сечĕн участокĕсенче пассажирсене, çав шутра инвалид пассажирсене, лартассине тата (е) антарса хăварассине йĕркелессипе çыхăннă ĕçсене пурнăçламалли йĕркене палăртать;

çăмăл таксипе пассажирсем тата багаж турттарас ĕçре регионти патшалăх тĕрĕслевĕн (асăрхавĕн) шайĕнче тăтăшах рейд ирттересси çинчен калакан положение çирĕплетет.

Федерацин такси çинчен калакан саккунĕпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн нормативлă право акчĕпе çаксене палăртма пултараççĕ:

çăмăл такси пек усă куракан транспорт хатĕрĕн экологи класĕ тĕлĕшпе хушма требованисене;

çăмăл таксипе турттаракан тĕлĕшпе çăмăл таксипе пассажирсем тата багаж турттарни çинчен калакан сведенисене Чăваш Республикин ĕç тăвакан полномочиллĕ органне е регионти çăмăл таксисен информаци тытăмне памалли требованисене, çавăн пекех Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе килĕшӳллĕн халăхăн санитарипе эпидемиологи ырлăхне тивĕçтерес е халăха тата территорисене чрезвычайлă лару-тăруран хӳтĕлес енĕпе мерăсем йышăннă чухне çăмăл таксипе турттаракан тĕлĕшпе пассажирсен хăрушсăрлăхне тивĕçтермелли требованисене;

турттараканăн тата (е) çăмăл такси заказ памалли службăн çăмăл таксипе турттармалли тарифсем çинчен Чăваш Республикин ĕç тăвакан полномочиллĕ органне сведенисем памалли тивĕçне, çавăн пекех çавнашкал сведенисене Чăваш Республикин ĕç тăвакан полномочиллĕ органĕн е тата Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн "Интернет" информаципе телекоммуникаци сетĕнчи официаллă сайтне вырнаçтармалли йĕркене;";

и) çакăн пек çырса вăтăр пиллĕкмĕш çĕнĕ абзац хушса хурас:

"Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципаллă маршрутсем тăрăх тăтăш турттарас ĕçе планламалли документа туса хатĕрлет тата пурнăçлать;";

к) вун улттăмĕш абзаца вăтăр улттăмĕш абзац тесе шутлас;

5) 7 статьяра:

а) ятне çакăн пек çырса хурас:

"**7 статья. Чăваш Республикин ĕç тăвакан полномочиллĕ органĕн полномочийĕсем**";

ă) пĕрремĕш абзаца çакăн пек çырса хурас:

"Чăваш Республикин ĕç тăвакан полномочиллĕ органĕ:";

б) иккĕмĕш абзацра ", унăн результачĕсем тăрăх муниципалитетсем хушшинчи тăтăш турттармалли маршрутсене палăртас, улăштарас, пăрахăçлас ĕçсене тата муниципалитетсем хушшинчи тăтăш турттармалли маршрутсемпе тăтăш турттармалли расписание улăштарас ĕçсене пурнăçлать" сăмахсене кăларса пăрахас;

в) виҫҫĕмĕш абзаца çакăн пек çырса хурас:

"Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ палăртнă йĕркепе халăха транспорт пулăшăвĕ памалли регионти комплекслă плана, халăха транспорт пулăшăвĕ памалли регионти стандарта хăйĕн компетенцийĕн шайĕнче туса хатĕрлет тата пурнăçлать;";

г) улттăмĕш абзаца çакăн пек çырса хурас:

"Чăваш Республикин Чăваш Республикин черетлĕ финанс çулĕнчи тата планпа пăхнă тапхăрти республика бюджечĕ çинчен калакан саккунĕн проекчĕ çумне хушса хума муниципалитетсем хушшинчи тăтăш турттармалли маршрутсем тăрăх тата Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципаллă маршрутсем тăрăх йĕркелесе тăракан хаксемпе тăтăш турттарассипе çыхăннă ĕçсене туянмалли укçа-тенкĕ виçисем çинчен калакан сĕнӳсем хатĕрлет;";

д) саккăрмĕш абзаца "муниципалитетсем хушшинчи тăтăш турттармалли маршрутсем" сăмахсем хыççăн ", Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципаллă маршрутсем" сăмахсем хушса хурас;

е) тăххăрмĕш абзаца "муниципалитетсем хушшинчи тăтăш турттармалли маршрутсем тăрăх" сăмахсем хыççăн ", Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципаллă маршрутсем тăрăх" сăмахсем хушса хурас;

ĕ) вун виҫҫĕмĕш абзаца çакăн пек çырса хурас:

"Чăваш Республикин чиккисенче (çав шутра автовокзалсен е автостанцисен территорийĕсенче) вырнаçнă регионсем хушшинчи тăтăш турттармалли маршрутсем çинче, Чăваш Республикин Çĕнĕ Шупашкар, Шупашкар хулин чиккисенче вырнаçнă Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципаллă маршрутсем çинче пуçламăш чарăну пункчĕ тата (е) вĕçри чарăну пункчĕ вырăнне усă куракан чарăну пункчĕсене палăртать;";

ж) вун пиллĕкмĕш абзаца çакăн пек çырса хурас:

"Чăваш Республикин Власть органĕсен "Интернет" информаципе телекоммуникаци сетĕнчи порталĕнчи хăйĕн официаллă сайтне муниципалитетсем хушшинчи тăтăш турттармалли маршрутсен реестрне (уйрăм предприниматель пурăнакан вырăн çинчен пĕлтерекен сведенисемсĕр пуçне), Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муници-

паллă маршрутсен реестрне кĕртнĕ сведенисене, муниципалитетсем хушшинчи тăтăш турттармалли маршрутсем тăрăх, Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципаллă маршрутсем тăрăх тăтăш турттармалли расписание тата транспорт пулăшăвĕпе усă куракансене кирлĕ ытти информацие вырнаçтарать;";

з) вун улттăмĕш абзаца ", Чăваш Республикин территорийĕнче çăмăл таксипе пассажирсем тата багаж турттарас ĕçре патшалăхăн регионти тĕрĕслевне (асăрхавне)" сăмахсем хушса хурас;

и) вун çиччĕмĕш абзаца ", Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципаллă маршрутсем çинче" сăмахсем хушса хурас;

к) вун саккăрмĕш абзац хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

л) çирĕммĕш абзаца "муниципалитетсем хушшинчи тăтăш турттармалли маршрутсем тăрăх" сăмахсем хыççăн ", Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципаллă маршрутсем тăрăх" сăмахсем хушса хурас;

м) çирĕм пĕрремĕш абзаца çакăн пек çырса хурас:

"муниципалитетсем хушшинчи тăтăш турттармалли маршрутсем тăрăх, Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципаллă маршрутсем тăрăх турттарас ĕçе пурнăçланине çирĕплетекен свидетельствăсем тата тăтăш турттармалли тивĕçлĕ маршрутсен карттисене парать тата вĕсене çĕнĕрен çырса йĕркелет, çавăн пекех муниципалитетсем хушшинчи тăтăш турттармалли тивĕçлĕ маршрутсем тăрăх турттарас ĕçе пурнăçланине çирĕплетекен свидетельствăсем вăйра тăрассине Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе палăртнă тĕслĕхсенче тата йĕркепе пăрахăçласси çинчен йышăну тăвать;";

н) çирĕм пиллĕкмĕш – вăтăрмĕш абзацсене çакăн пек çырса хурас:

"ирĕк панине парассине, вăл вăйра тăрассине чарса лартассине, ирĕк пани тепĕр хут вăя кĕрессине, ăна пăрахăçлассине;

çăмăл такси заказ памалли службăн ĕç-хĕлне пурнăçлама ирĕк парассине, ирĕк панине чарса лартассине, ирĕк пани тепĕр хут вăя кĕрессине тата ăна пăрахăçлассине;

регионти çăмăл таксипе турттаракансен реестрне, регионти çăмăл таксисен реестрне тата регионти çăмăл такси заказ памалли служба реестрне тытса пырассине;

ирĕк панине пăрахăçласси çинчен, çăмăл такси заказ памалли службăн ĕç-хĕлне пурнăçлама ирĕк панине пăрахăçласси çинчен калакан заявле-

ние Федерацин такси çинчен калакан саккунĕпе палăртнă тĕслĕхсенче тата йĕркепе суда тăратассине;

çăмăл таксипе пассажирсем тата багаж турттарас ĕçре регионти патшалăх тĕрĕслевĕ (асăрхавĕ) шайĕнче тăтăшах рейд ирттерес ĕçе пурнăçлассине;

саккуна пăснине тупса палăртнă тĕслĕхсене пĕтермелли çинчен калакан предписани парассине;";

о) вăтăр иккĕмĕш абзацра:

"Федерацин "Раççей Федерацийĕн уйрăм саккунĕсен акчĕсене улшăнусем кĕртесси çинчен" 2011 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 69-ФЗ №-лĕ саккунĕн 9 статйин 1^4-мĕш пайĕпе," сăмахсене "Федерацин такси çинчен калакан саккунĕн 3 статйин 4–6-мĕш пайĕсемпе" сăмахсемпе улăштарас;

"ĕç тăвакан влаçĕн полномочиллĕ органĕ" сăмахсене "ĕç тăвакан полномочиллĕ органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

п) çакăн пек çырса вăтăр çиччĕмĕш çĕнĕ абзац хушса хурас:

"Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципаллă маршрутсем тăрăх тăтăш турттарас ĕçе планламалли документа туса хатĕрлет тата пурнăçа кĕртет;";

р) вăтăр çиччĕмĕш абзаца вăтăр саккăрмĕш абзац тесе шутлас;

6) 7^1 статьян 1-мĕш пайĕнче:

иккĕмĕш абзацра "тата хулари çĕр çинчи электричество транспорчĕ" сăмахсене кăларса пăрахас;

çиччĕмĕш абзацра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн полномочиллĕ органне" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан полномочиллĕ органне" сăмахсемпе улăштарас;

саккăрмĕш абзацра "тата хулари çĕр çинчи электричество транспортне" сăмахсене кăларса пăрахас;

вун иккĕмĕш абзацра ", хулари çĕр çинчи электричество транспортĕнче" сăмахсене кăларса пăрахас;

вун тăваттăмĕш абзацра "тата хулари çĕр çинчи электричество" сăмахсене кăларса пăрахас;

7) 8 статьяра:

1-мĕш пайăн пĕрремĕш предложенийĕнче:

"Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн полномочиллĕ органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан полномочиллĕ органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

", Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципаллă маршрутсен" сăмахсем хушса хурас;

2-мĕш пайра:

"муниципалитетсем хушшинчи тăтăш турттармалли маршрутсен реестрĕсене" сăмахсем хыççăн ", Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципаллă маршрутсен реестрне" сăмахсем хушса хурас;

"Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн полномочиллĕ органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан полномочиллĕ органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

8) 8^1 статьяра:

а) ятне çакăн пек çырса хурас:

"**8^1 статья. Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципалитетсем хушшинчи тăтăш турттармалли маршрутсем, муниципаллă маршрутсем тăрăх тăтăш турттарас ĕçе йĕркелесе тăман хаксемпе пурнăçлама ирĕк илмелли уçă конкурс**";

ă) 1-мĕш пайра:

"муниципалитетсем хушшинчи тăтăш турттармалли маршрутсем тăрăх" сăмахсем хыççăн ", Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципаллă маршрутсем тăрăх" сăмахсем хушса хурас;

"Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн полномочиллĕ органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан полномочиллĕ органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

9) 9^1 статьяна çакăн пек çырса хурас:

"**9^1 статья. Çăмăл таксипе турттарасси**

Пассажирсене тата багажа çăмăл таксипе турттарас ĕç-хĕле юридически сăпат, уйрăм предприниматель е физически сăпат регионти çăмăл таксисен реестрне вĕсем çинчен пĕлтерекен сведенисене кĕртнĕ транспорт хатĕрĕсемпе усă курса, регионти çăмăл таксисен реестрĕнче çырса çирĕплетнĕ ирĕк панине тĕпе хурса пурнăçлать, ирĕк пани вăйра тăрассине чарса лартман е пăрахăçламан пулсан.

Юридически сăпатсене тата уйрăм предпринимательсене ирĕк панине пилĕк çуллăха параççĕ. Физически сăпатсене ирĕк панине пилĕк çул-

лăха е тата, енчен те физически сăпат ирĕк панине илме тăратнă заявленире сахалрах вăхăт кăтартнă пулсан, сахалрах вăхăта параççĕ.

Ирĕк панине парасси е ирĕк пани вăйра тăнине пăрахăçласси çинчен, çăмăл таксипе турттаракансен регионти реестрне улшăнусем кĕртесси çинчен, çăмăл таксипе турттаракансен регионти реестрĕнчен çырса панине тата çăмăл таксисен регионти реестрне сведенисем кĕртни çинчен пĕлтернине илесси çинчен, çăмăл таксисен регионти реестрне улшăнусем кĕртесси çинчен, çăмăл таксисен регионти реестрĕнчен сведенисене кăларса пăрахасси çинчен, çăмăл таксисен регионти реестрĕнчен çырса панине илесси çинчен, çăмăл таксипе турттаракансен регионти реестрне улшăнусем кĕртесси çинчен калакан заявленисен формине Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ палăртать.

Çăмăл такси заказ памалли службăн ĕç-хĕлне пурнăçламалли право ултă çул вăйра тăрать тата ăна Чăваш Республикин ĕç тăвакан полномочиллĕ органĕ юридически сăпат е уйрăм предприниматель çăмăл такси заказ памалли службăн ĕç-хĕлне пурнăçламалли правăна илме панă заявление тĕпе хурса парать.";

10) 9^2 статьяна çакăн пек çырса хурас:

"9^2 статья. Регионти çăмăл таксипе турттаракансен реестрĕ, регионти çăмăл таксисен реестрĕ тата регионти çăмăл такси заказ памалли службăн реестрĕ

1. Регионти çăмăл таксипе турттаракансен реестрне, регионти çăмăл таксисен реестрне тата регионти çăмăл такси заказ памалли службăн реестрне (малалла – регионти реестрсем) Чăваш Республикин ĕç тăвакан полномочиллĕ органĕ электронлă майпа çак мелсенчен пĕринпе тытса пырать:

регионти çăмăл таксисен информаци тытăмĕпе усă курса тата çав информаци тытăмĕнчен регионти реестрсенче упранакан сведенисене федерацин çăмăл таксисен патшалăх информаци тытăмне парса;

федерацин çăмăл таксисен патшалăх информаци тытăмĕпе усă курса.

2. Регионти реестрсенче упранакан сведенисене (персональнăй даннăйсен шутне кĕртнĕ сведенисемсĕр, çав шутра Федерацин такси çинчен калакан саккунĕн 10 статйин 1-мĕш пайĕн 5-мĕш тата 6-мĕш пункчĕсенче кăтартнă сведенисемсĕр пуçне) Чăваш Республикин ĕç тăвакан полномочиллĕ органĕн "Интернет" информацип телекоммуникаци сетĕнчи официаллă сайтне вырнаçтармалла.";

11) 9^3 статьяра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн полномочиллĕ органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан полномочиллĕ органĕ" сăмахсемпе улăштарас.

2 статья

1. Çак Саккун, çак статьяпа урăх вăхăтра вăя кĕртме палăртнă положенисемсĕр пуçне, ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

2. Çак Саккунăн 1 статйин 1-мĕш, 2-мĕш пункчĕсем, 4-мĕш пункчĕн "е", "з" тата "к" çум пункчĕсем, 5-мĕш пункчĕн "з", "н" çум пункчĕсем тата "о" çум пункчĕн иккĕмĕш абзацĕ, 9-мĕш, 10-мĕш пункчĕсем 2023 çулхи авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вăя кĕреççĕ.

3. Çак Саккунăн 1 статйин 9-мĕш пункчĕн тăваттăмĕш тата улттăмĕш абзацĕсем 2029 çулхи çурла уйăхĕн 31-мĕшĕччен вăйра тăраççĕ.

4. Çак Саккунăн 1 статйин 3-мĕш пункчĕн "а" çум пункчĕн иккĕмĕш абзацĕ, "ă" çум пункчĕ, "б" çум пункчĕн тăваттăмĕш абзацĕ, "в" çум пункчĕ, "г" çум пункчĕн виççĕмĕш абзацĕ, "д" тата "е" çум пункчĕсем, "ĕ" çум пункчĕн иккĕмĕш–тăваттăмĕш, улттăмĕш абзацĕсем, "ж" çум пункчĕн иккĕмĕш абзацĕ, "з" çум пункчĕн тăваттăмĕш–улттăмĕш, тăххăрмĕш абзацĕсем, "и" çум пункчĕн виççĕмĕш абзацĕ, "к" çум пункчĕн иккĕмĕш тата виççĕмĕш абзацĕсем, 4-мĕш пункчĕн "б"–"г", "ĕ" çум пункчĕсем, "ж" çум пункчĕн иккĕмĕш абзацĕ, "и" çум пункчĕ, 5-мĕш пункчĕн "г"–"ж", "и", "л", "м", "п", "р" çум пункчĕсем, 6-мĕш пункчĕн иккĕмĕш, тăваттăмĕш–улттăмĕш абзацĕсем, 7-мĕш пункчĕн тăваттăмĕш тата улттăмĕш абзацĕсем, 8-мĕш пункчĕн "а" çум пункчĕ, "ă" çум пункчĕн иккĕмĕш абзацĕ 2024 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вăя кĕреççĕ.

5. Çак Саккунăн 1 статйин 4-мĕш пункчĕн "ă" çум пункчĕ, 5-мĕш пункчĕн "в" çум пункчĕ 2024 çулхи пуш уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вăя кĕреççĕ.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ – О.Николаев

Шупашкар хули
2023 çулхи утă уйăхĕн 7-мĕшĕ
51 №